27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
МАЙ
12
ЭРНЕКУН
93(6588) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ТРАКТОРСЕН ПĔТĔМ ВĂЙĔПЕ ТУЛЛИН УСĂ КУРАР

Республикăри колхозсем çураки ĕçĕсене иртнĕ çулхинчен чылай кая юлса пуçăнни, тăпрари нÿрлĕх хăвăрт типсе пыни уйхир ĕçĕсене темиçе хут хăвăртлатма хушаççĕ

Халь вăхăтăн кашни секунчĕ хаклă. Çуракине вăраха тăсни тырпул тухăçне чакарать. Çавăнпа та колхозлă ялăн мĕнпур вăйĕпе майĕсене çуракине кĕске срокра, хăвăрт туса иртерме çĕре мобилизацилемелле

Кăçал колхозсенчи туртăм вăйĕнче чылай пысăк йывăрлăхсем пурри пуриншĕн те паллă. Çакă вăл машинăпа трактор станцийĕсен ответлăхне темиçе хут ÿстерет. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх ĕçĕсен 1944 çулхи планĕ çинчен» йышăннă постановленине пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пырса, кашни МТСăн тракторсемпе тумалли ĕçсен планне вăхăтра тултармалла.

Çуракин çак ответлă тапхăрĕнче республикăри чылай МТС-сем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлама тытăнчĕç. Хĕрлĕ Ялав илнĕ Шăхасан, Елчĕк, Йĕпреç машинно-тракторнăй станцийĕсем çуракин малтанхи кунĕсенчех хăвăрт та ăнăçлă ĕçлеме тытăнчĕç. Шăхасан МТС-ĕнчи 1-мĕш номерлĕ трактор бригадинчи И. Долговпа Н. Серов трактористсем малтанхи кунах сменăри задание ирттерсе тултарчĕç. Вĕсем «СТЗ» маркăллă тракторпа 4 гектар сухалас вырăнне 6-шар гектар сухаланă. МТС майăн 10-мĕшĕ тĕлне çураки ĕçĕсен планне 45 процент тултарнă. 6-мĕш бригада (бригадирĕ Тимофеев юлташ) çураки вăхăтĕнчи ĕçсен планне 80 процент тултарнă, 1-мĕш бригада çураки вăхăтĕнчи плана 60 процент пурнăçланă.

Анчах Сĕнтĕр, Шупашкар, Комсомольски, Канаш машинно-тракторнăй станцийĕсен руководителĕсем çак ответлă тапхăрта хăйсен çаврăнăçусăрлăхне, оперативлăх çитменнине, вăрçă вăхăтĕнчи чăрмавсемпе йывăрлăхсене çĕнтерме пултарайманнине кăтартса пачĕç. Шупашкар МТС-ĕнчи 5 трактора ĕçе пуçăниччен юсаса пĕтереймен, ака ĕçĕ хĕрсе пынă вăхăтра тăватă трактор МТС картишĕнче ларнă. Сĕнтĕр МТС-ĕнче те çакăн пек тĕслĕхсем пур.

Асăннă МТС-сенче (директорĕсем Смирновпа Чупраков юлташсем) тракторсене юсас ĕçе тĕплĕн туман, ячĕшĕн кăна тунă. Апла пулин те мĕнпур тракторсене государство комиссийĕ юсавлă тесе йышăннă. Ыйтас килет: государство комиссине ертсе пынă ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем Караушевпа Петров юлташсем мĕн тунă-ши? Ĕçе юрăхсăр тракторсене йышăнма вĕсене кам ирĕк панă? Вĕсем çапла хăтланса республикăна ертсе пыракан органсем умĕнче ырă ятлă пуласшăн тăрăшнă. Вĕсем, хăйсен тимсĕрлĕхне пула, государство умĕнче, фронт умĕнче айăпа кĕресси çинчен маннă.

Канаш, Комсомольски тата ытти хăшпĕр МТС-сем те çаврăнăçусăр ĕçлеççĕ. Комсомольски МТС-ăн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Ку тарана çитиччен трактор сеялкисем МТС картишĕнчех лараççĕ. Тракторсене кăкарса ĕçлемелли хатĕрсем те çук. «Коммунар» колхоза трактор хыççăн сÿресем çук. Вĕрен ялан татăлать. Тракторсем кăкарса ĕçлеме çук. Шмидт ячĕпе тăракан колхоза Ванюшкин ертсе пыракан трактор бригадине ака-

на тухнăранпа пурĕ те 25 гектар кăна сухаланă. Ĕç пахалăхĕ япăх. Морозов тракторист 3 гектара шăйрăклă сухаланă. Ăна йышăнман, халĕ колхозниксем лашапа тепĕр хут сухалаççĕ. Икĕ трактор вентилятор чĕнĕсем татăлнă пирки икĕ кун хушши ĕçлемесĕр ларнă. Тракторсемпе ĕçе пуçăнма чылай колхозсенче горючи пулман. Канашпа Комсомольски МТС-ĕсен директорĕсем Зайцевпа Алексеев юлташсем пĕрре кăна мар: эпир çуракине тухма пур енчен те хатĕр, тесе ĕнентернĕ, анчах вĕсен сămaхĕсем çилпе кăна вĕçсе карĕç.

Ĕç çине тимсĕр пăхакан руководительсем пирки М. И. Калинин юлташ çапла каланă: **«Хăйĕн тимсĕрлĕхне пула е сÿрĕк ĕçленине пула ĕçе кая юлса туса пыракан çын... пачах тырпулсăр тăрса юлма пултарать, государство умĕнчи хăйĕн обязанноçĕсене кирлĕ пек пурнăçа кĕртеймест. Çавăн пек çын ĕнтĕ — вăл хăй кирек кам пултăр: хăть колхоз председателĕ, хăть МТС е совхоз директорĕ, хăть райисполком председателĕ, хăть райком секретарĕ, — вăл пирĕн çара хăвăртрах çĕнтерÿ тума сунатăп тесе шантарать пулсассăн та, унăн сăмахĕсем виçĕ пуса те тăмаççĕ. Хăйсен ĕçĕпе усă мар, тăкак çеç кÿрекен руководительсем шантарса каланă сăмахсем мĕне кирлĕ вара вĕсем?»** Çак сăмахсем Сĕнтĕр, Шупашкар, Канаш, Комсомольски МТС директорĕсемпе çав районсен руководителĕсене тÿррĕнех пырса тивеççĕ. Паллах, вĕсем хăйсен айăпĕсене сирме тĕрлĕ сăлтавсем шырама пăхĕç. Анчах вĕсен халь сăлтавсене сирмелли майсем шыраса пуçа çавăриччен хĕрÿ ĕçе, хирти вĕресе тăракан ĕçе большевикла ертсе пыма тытăнмалла.

Çураки ĕçĕсене татăклăнах хăвăртлатма пур майсем те пур. Халĕ çураки ăнăçлăхне йăлтах парти райкомĕсемпе райисполкомсем, райçĕрĕç пайĕсем, МТС-сен директорĕсемпе колхозсен председателĕсем колхозниксемпе трактористсене çуракинчи йывăрлăхсене çĕнтерме лайăх мобилизацилени татса парать. **Тракторсене сменăпа, талăкра 20 сехетрен кая мар** ĕçлеттермелле.

Механиксен ĕç вырăнĕ трактор бригадисенче пулмалла. Механик—МТС директорĕн сылтăм алли. Тракторпа тумалли ĕçсен государство планне пурнăçа кĕртес ĕçре чи пирваи МТС директорĕ ответ тытать пулсан, тракторсене йĕркеллĕ те тухăçлă ĕçлеттерессишĕн, горючи перекетлесе хăварассишĕн, трактористсемпе трактористкăсене лайăх ĕç условийĕсем туса парассишĕн директорпа танах механиксем те ответлă пулса тăраççĕ.

Чылай çĕрте тракторсемпе тумалли ĕçсен **пахалăхĕшĕн,** тракторсен **пĕтĕм вăйĕпе** туллин усă курассишĕн çителĕксĕр тăрăшаççĕ. Трактор сеялкисемпе усă курманни, сÿре кăкармасăр ĕçлени, ăшăх сухалани нисçта та пулма тивĕçлĕ мар.

Партипе комсомол организацийĕсен трактористсемпе трактористкăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва пуçарса, ертсе пымалла. Çапла тумалла: кашни трактористпа трактористка Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртессишĕн мĕнпур вăйĕпе кĕрештĕр, хăйне панă задание пурнăçа кĕртмесĕр ĕçе ан пăрахтăр, ĕç нормине ăнăçлă тултарса пытăр.

Партипе правительство МТС-сем çине пысăк та ответлă задача хучĕç. Çав задачăсене большевикла пурнăçласси патне тăрса кĕрешер!

В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ ИСЛАНДИ ПОСЛАННИКНЕ П. БЕНЕДИКТССОН ГОСПОДИНА ЙЫШĂННИ

Майăн 8-мĕшĕнче СССР Ют çĕршывсен Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Исланди Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй Посланникне тата Полномочнăй Министрне П. Бенедиктссон господина йышăннă. Йышăну П. Бенедиктссон господин хăйĕн верительнăй грамотине СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне парас тĕлĕшпе пулса иртнĕ.

В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ УРУГВАЙ ПОСЛАННИКНЕ Э. ФРУГОНИ ГОСПОДИНА ЙЫШĂННИ

Майăн 9-мĕшĕнче СССР Ют çĕршывсен Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Уругвайăн Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй Посланникне тата Полномочнăй Министрне Э. Фругони господина йышăннă. Йышăну Э. Фругони господин хăйĕн верительнăй грамотине СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне парас тĕлĕшпе пулса иртнĕ.

Исландин чрезвычайнăй Посланникĕ тата Полномочнăй Министрĕ П. Бенедиктссон господин хăйĕн верительнăй грамотисене СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне М. И. Калинин юлташа пани

Майăн 10-мĕшĕнче Кремльте СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Исландин СССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй Посланникĕпе Полномочнăй Министрне П. Бенедиктссон господина йышăннă. П. Бенедиктссон господин М. И. Калинин юлташа верительнăй грамотисене панă.

Верительнăй грамотăсене панă чухне СССР Ют çĕршывсен Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов юлташ, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин юлташ, СССР Ют çĕршывсен Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн протокол отделĕн заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ, СССР Наркоминделĕн Европăри 5-мĕш отделĕн заведующийĕ Н. Д. Орлов юлташ пулнă.

Верительнăй грамотăсем илнĕ хыççăн М. И. Калинин юлташ П. Бенедиктссон господинпа калаçнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 9-мĕшĕнче КРЫМРА УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, пирĕн авиаци йышлăн пыра-пыра çапса пулăшнипе тата артиллери пулăшса тăнипе, СЕВАСТОПОЛЬ районĕнче фашистла нимĕç çарĕсене хирĕç наступлени туса пынă.

Тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе, пирĕн çарсем, темиçе сехет наярах, Хура тинĕс хĕрринчи крепоçа тата тинĕс-çар базине — СЕВАСТОПОЛЬ хулине—штурмласа тытса илнĕ.

Çапла ĕнтĕ, Крымра нимĕçсем хирĕç тăрса çапăçнă юлашки пунктне пĕтерсе лартнă, КРЫМА фашистла нимĕç захватчиксенчен пĕтĕмпех тасатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

Майăн 8-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллери тăшманăн 48 самолетне пĕтерсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ТАТА ТОРПЕДА КАТЕРĔСЕМ СЕВАСТОПОЛЬ РАЙОНĔНЧЕ ТĂШМАН СУДНИСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Майăн 9-мĕшĕ ыран тăх чух çĕрле пирĕн авиаци питĕ пысăк вăйĕсем тăшманăн Севастополь районĕнчи суднисене пыра-пыра çапнă. Тăшманăн Казачья, Стрелецкая тата Камышовая бухтисенче тăракан транспорчĕсене ытти ишмелли хатĕрĕсене çине бомбăсем пăрахнă. 30 пушар ытла тухнă, транспорчĕсем, причалсем тата çар складĕсем çуннă. Бут хыçса илнĕ темиçе судно сирпĕнсе кайнă. Вăйлă взрывсем причалсенче складсем сирпĕнсе те пулнă.

Пирĕн торпеда катерĕсем усă тăрса тăшманăн пĕтĕмĕшле 7.000 тонна тиекан икĕ транспортне шыва путарнă.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ТАПА ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Майăн 9-мĕшĕ ыран тепĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци тăшманăн Тапа чугун çул узелĕнче (Эстони) капланса тăнă çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Тăватă вăйлă взрыв пулнă. Пушарсем чугун çул узелĕн чылай пысăк пайне ярса илнĕ. Тăшманăн çар пурлăхĕпе техникине тиесе лартнă вагонсемпе платформăсем çуннă.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ФИНСЕН КОТКА ПОРТНЕ ТАПĂННИ

Майăн 8-мĕшĕнче Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ финсен Котка портне тапăннă, тăшман карапĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахса, тăшманăн 2.000 тонна таякан транспортне тата тинĕсре çÿремелли 3 катерне шыва путарнă. Портра тăракан тепĕр транспорта тата причалсене сиенленĕ. Унсăр пуçне, Финн заливĕнче бомбăсем тÿрех пырса тивнипе тăшманăн пĕр тральщикĕпе хуралта çÿрекен карапĕ шыва путнă.

МАЙĂН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 10-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусем пулман.

Майăн 9-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ХУРА ТИНĔС ФЛОЧĔН АВИАЦИЙĔ ТĂШМАН СУДНИСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Майăн 9-мĕшĕнче ирхине Хура тинĕс флочĕн разведки тинĕсре тăшманăн транспорчĕсемпе ытти суднисене асăрханă. Флот авиацийĕ пыра-пыра çапса бомбăсем тÿрĕ тивертнипе, пĕтĕмпе 4.000 тонна таякан 2 транспорта, хурал катерне тата хăвăрт çÿрекен темиçе десант баржине шыва путарнă. Тăшманăн темиçе суднине сиенленĕ.

☆ ☆ ☆

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман пехоти пирĕн позицисене икĕ хут атакăланă. Пĕр соединени чаçĕсем, хирĕç пырса çапса, нимĕçсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 вилли таран выртса юлнă. Нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Пирĕн авиаци тăшманăн çулйĕрĕсене тата пĕр çĕре пухăна-пухăна тăнă çарĕсене пыра-пыра çапнă. Гварди старши лейтенанчĕ Михаленко ертсе пыракан штурмовиксен звени танксемпе автомашинăсем тиенĕ чугун çул эшелонне çунтарса янă. Совет Союзĕн Геройĕ гварди капитанĕ Макаров ертсе пыракан летчиксен ушкăнĕ нимĕçсен 5 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупшине персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Тирасполь хулинчен кăнтăртарахра пирĕн разведчиксен отрячĕ çĕрле, вĕтлĕхпе пырса, тăшман укреплениĕсен малти линийĕ хыçне тухнă. Разведчиксем блиндажсене вăркăнса кĕнĕ те гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Темиçе нимĕçе тыткăна илнĕ, вĕсене пирĕн боецсем хăйсен чаçне илсе таврăннă.

* * *

Баренц тинĕсĕнче пирĕн самолетсем тăшманăн 3 мотоботне шыва путарнă.

* * *

Львов облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшманăн пĕр пысăк ялти гарнизонне тапăннă. Çĕрле кĕске вăхăт хушши тытăçса илсе, совет патриочĕсем нимĕçсене пĕтерсе тăкнă та çав яла тытса илнĕ. Тăшманăн апат-çимĕç складĕнче партизансем 12.000 пăт тĕштырă тытса илнĕ, ăна вара халăха валеçсе панă. Львов облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ 10 кун хушшинче нимĕçсен 6 çар эшелонне тата пĕр бронепоездне ÿпĕнтерсе янă. 6 паровоз (вĕсенчен пĕрне броньăланă пулнă), 4 броневагон, 65 вагонпа платформа çĕмĕрĕлнĕ. Тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Чугун çулăн çав участокĕнче вара поездсем 3 кун хушши çÿреймен.

* * *

Ленинград облаçĕнчи Дедовичски районри Дубровка, Песочек, Негодицы тата ытти ялсенчи çынсем фашистла нимĕç ирсĕрĕсем тунă тискер ĕçсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: «Эпир гитлеровецсем тискер преступленисем тунине куртăмăр. Нимĕç вăрă-хурахĕсен тискер ĕçĕсене эпир куртăмăр кăна мар, тÿссе те ирттертĕмĕр. Фашистла пуçкасакансем Дедовичски районри темиçе çĕр, темиçе пин мирлĕ çынна асаплантарса вĕлерчĕç, вĕсене вырăс çыннисем пулса хăйсен Тăван çĕршывне юратнăшăн çеç вĕлерчĕç. Нимĕçсем Загорье, Клинец, Петрово, Б. Молоково, Ямицы ялĕсене тата ыттисене те нимĕн хăвармиччен çунтарса ячĕç. Вĕсем совет çыннисене нумайĕшне Германие каторгăна хăваласа кайрĕç. Фашистла пусмăрлăхра халь Илья Баранов красноармеецăн арăмĕпе ывăлĕ, Иван Николаев красноармеецăн арăмĕпе ывăлĕ тата ытти нумай çынсем асапланса пурăнаççĕ. Фашистла ирсĕрсем пĕр айăпсăр çынсене вĕлеретчĕç. Красная Горка ялĕнче гитлеровецсем кăкăр ачи йатнă 10 хĕрарăма персе вĕлерчĕç. Закрючье ялĕнче нимĕç пуçкасаканĕсем Дмитрий Никитина, унăн ывăлĕпе хĕрне, Михаил Сидорова, Антонина Степановăна тата ыттисене те персе вĕлерчĕç. Нимĕçсем совет гражданĕсене Алексей Савицкийпе Екатерина Бойкинăна калама çук тискеррĕн асаплантарчĕç. Вĕсене пайăн-пайăн касса вакларĕç — хăлхисене касрĕç, куçĕсене чиксе шăтарчĕç. Нумайччен асаплантарнă хыççăн фашистла ирсĕрсем çав çынсене вара персе вĕлерчĕç.

Çак хăрушă ĕçсем пĕтсе ларнишĕн эпир телейлĕ. Паттăр Хĕрлĕ Çар пирĕн ялсене нимĕçсен аллинчен хăтарчĕ. Халĕ эпир Хĕрлĕ Çар ретне тăтăмăр. Тăван çĕршыв пире гитлерла бандитсемпе çапăçма хĕçпăшал пачĕ. Ирсĕр тăшмана каçармăпăр, тесе тупа тăватпăр. Тăшмана эпир пуриншĕн те тавăрăпăр. Эпир ăна пĕр хĕрхенмесĕр тавăрăпăр. Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!»

Акт çине алă пуснă: В. Петров, В. Кузьмин, П. Павлов, Ф. Ефимов, Н. Григорьев, А. Коломенский, Н. Топоров, С. Лукин, М. Яковлев, Ф. Егоров, И. Соловьев, В. Сергеев тата ыттисем те.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Верховный Главнокомандующине Совет Союзĕн Маршалне Сталин юлташа

Совет Союзĕнче поляксен хĕçпăшаллă вăйĕсен никĕсне хывни çулталăк çитнĕ кун поляксен 1-мĕш армийĕн çар совечĕ Сире — Совет Союзĕн Маршалне — пĕтĕм арми ячĕпе чунтан-чĕререн саламлать.

Сире, Правительствăна тата Совет Союзĕнчи халăхсене сакна шантарса калатпăр: поляксен хĕçпăшаллă вăйĕсемпе Хĕрлĕ Çарăн çулталăк каярах пуçланса юнпа çирĕпленнĕ боевой туслăхне эпир малашне те ÿстерсе пырăпăр, пирĕн пĕрлехи тăшмана — гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешÿре хамăр задачăна чыслăн пурнăçлăпăр.

БЕРЛИНГ, ЗАВАДСКИЙ, СВЕРЧЕВСКИЙ.

Тăшмана хĕçпе, ĕçпе, укçа-тенкĕпе çĕмĕрер! Кашниех çĕнĕ заем илер!

Республикăра заем сарасси мĕнле пырать

Республикăри ĕççыннисем хушшинче çĕнĕ заема майăн 11-мĕшĕ тĕлне 183.273 пин тенкĕлĕх, урăхла каласан, бюджетпа вырнаçтарма пăхнă хисепрен ытларах 10.273 пин тенкĕлĕх сарнă.

Апла пулин те ку ĕç пур районсенче те лайăх пырать теме çук-ха. Улатăр, Йĕпраç, Пăрачкав, Чурачăк, Шăмăршă районĕсенче çĕнĕ заема бюджетпа вырнаçтарма пăхнă чухлĕ те сарайман.

Малта пыракан Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски, Вăрмар, Октябрьски районĕсем ялсенче сарнă заем укçине пухса пĕтернĕ. Анчах, пĕтĕм республикипе илсен, ялсенче сарнă заем укçине пухасси çителĕксĕр пырать-ха. Майăн 11-мĕшĕ тĕлне заем укçине 92.604 пин тенкĕ ытларах çеç пухнă.

Заем укçине пухас тĕлĕшпе уйрăмах Кувакино, Йĕпреç, Улатăр, Шăмăршă районĕсем юлса пыраççĕ. Вĕсем заем укçине заем вырнаçтарнă хисепĕн 30 процентĕ чухлĕ те пухман. Советски, Хĕрлĕ Чутай, Канаш, Пăрачкав, Сĕнтĕр районĕсем те хытă юлса пыраççĕ.

Асăннă районсенчи партипе совет тата комсомол организацийĕсем юлашки кунсенче заем сарас ĕçе сÿрĕклетни сисĕнет. Çавăнпа ĕнтĕ укçа пухасси те юлса пырать.

Партипе совет тата комсомол организацийĕсен, финанс органĕсен ĕçри сÿрĕклĕхе халех пĕтермелле. Ĕççыннисем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе большевикла организацилесе, заем сарас тата заем укçи пухас ĕçе хăвăртлатмалла.

Патриотăн чаплă парни

ТБИЛИСИ, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Зестафонски районри Цулукидзе ячĕпе тăракан колхозра заема чи малтан çырăннисемпе пĕрле Петр Асланович Гурули те çырăннă. Вăл государствăна кивçен 200.000 тенкĕ панă, укçине сийĕнчех тÿленĕ. Темиçе кун иртсен, совет патриочĕ районри перекет кассине пынă та заем облигацийĕсене татах 250.000 тенкĕлĕх илнĕ. Çапла вара Гурули колхозник заем облигацийĕсемшĕн 450.000 тенкĕ тÿленĕ.

Учительсен активлăхĕ

КУКЕÇ, майăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри учительсем çĕнĕ заема, иртнĕ тенĕ пекех, иккĕшер уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăнчĕç. Чылайĕшĕ сийĕнчех укçине те тÿлерĕç. Иккассинчи вăтам шкулти учительсем 21.950 тенкĕлĕх çырăнса укçине 7.480 тенкĕ, Чĕкĕрти пуçламăш шкулта 2.700 тенкĕлĕх çырăнса 1.500 тенкĕ тÿленĕ. Кошнарти пуçламăш шкулти учительница Григорьева уйăхра 300 тенкĕ илет. Вăл 600 тенкĕлĕх çырăннă. Учитель Афанасьев 1.100 тенкĕлĕх çырăнса укçине пĕтĕмпех хывнă.

М. МИХАЙЛОВ

Заем укçине пухса çитернĕ

ИШЛЕЙ, майăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Кашкасси ялсоветĕнчи «Большевик» колхоз членĕсем Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне туллин кăмăлпа çырăнса илчĕç. Колхоз председателĕ Ф. Пайманов 7.000 тенкĕлĕх, конюх Н. Пайманов 5.000 тенкĕлĕх, К. Васильев колхозник 4.000 тенкĕлĕх çырăнса укçине сийĕнчех тÿленĕ. Чылай колхозниксем пиншер тенкĕрен кая мар çырăннă. Колхозĕпе 100.600 тенкĕлĕх çырăнса, укçине пĕтĕмпех пухса çитернĕ.

А. ПАВЛОВ.

ИШЛЕЙ, майăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Етĕрнекасси ялсоветĕнчи ĕççыннисем Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне çырăннă хыççăнах укçине тÿлеме тытăнчĕç. Ку ĕçе ялсовет исполкомĕн председателĕ Капранов юлташ пуçарса ячĕ. Вăл çĕнĕ заема 9 уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăнчĕ, укçине пĕтĕмпех тÿлерĕ. Ăна кура «Красный пахарь» колхоз председателĕ Лебедев юлташ 5 пин тенкĕлĕх, çав колхозăн бригадирĕ Куплаев юлташ 2 пин тенкĕлĕх, «Броневик» колхоз председателĕ Матвеев 4 пин тенкĕлĕх, бригадирĕ Евсеева 1.500 тенкĕлĕх çырăнса укçине парса татрĕç.

Ялсоветĕнчи ĕççыннисем заем укçине пĕтĕмпех тÿлесе татнă.

Г. СЕРЕБРЯКОВ.

Рабочисемпе служащисем заем укçине срокчен тÿлеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Предприятисемпе промысла артелĕсенчи рабочисемпе служащисем çĕнĕ заема пысăк активлăхпа çыранса илеççĕ. Типографири рабочисем уйăхри ĕç укçин 140 процентĕ чухлĕ çырăннă. Çавăн пекех «Красный строитель» артельпе вăрман хуçалăхĕн коллективĕсем те уйăхри ĕç укçинчен чылай ирттерсе çырăннă.

Рабочисемпе служащисенчен нумайĕшĕ заем укçине срокчен тÿлеме сăмах панă. Халĕ вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртеççĕ. Çапла, вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсем заем укçине 1.720 тенкĕ тÿленĕ те ĕнтĕ. «Красный строитель» артелĕн коллективĕ заем укçине пилĕк уйăх хушшинче тÿлесе татма пулнă.

Заем укçи хăй тĕллĕн пухăнасса кĕтсе ларнă çĕрте

СĔНТĔР, майăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне районра паянхи кун тĕлне 5 миллион та 525 пин тенкĕлĕх, урăхла каласан бюджетпа вырнаçтарма палăртнинчен 525 пин тенкĕ ытларах сарнă. Нумайĕшĕсем заем укçине сийĕнчех хываççĕ. Çапла, Калайкасси, Сĕнтĕр, Пушкăрт ялсовечĕсенчи малта пыракан колхозсем бюджетпа пăхнинчен ирттерсе çырăнса, укçине пĕтĕмпех хывнă. Сĕнтĕр ялсоветĕнчи Фрунзе ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Андреев юлташ 10 пин тенкĕлĕх, «Гигант» колхозри 6-мĕш класра вĕренекен ача Евстафий Ситников 750 тенкĕлĕх çырăнса укçине те тÿленĕ. Кун пек патриотла примерсем татах та пур.

Анчах хăшпĕр ялсоветсенчи заем укçине пухасси сÿрĕк пулса пырать-ха. Уйрăмах Ярославка (председателĕ Егоров), Кĕçĕн Тимерли (председателĕ Ефимов), Кăпас (председателĕ Киршев) ялсовечĕсем юлса пыраççĕ. Кăпас ялсоветĕнчи колхозсем 432 пин тенкĕлĕх çырăннă, укçине 57 пин тенкĕ çеç пухнă. Ильинка ялсоветĕнче заем илме 147 çынна çеç явăçтарнă, заем укçине пĕр пус та пухман. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Волков юлташ заем вырнаçтарас тата заем укçи пухас ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанса ларать.

Çавнашкалах заем укçи пухасси МТС-ри трактористсем хушшинче те вăраххăн пырать-ха.

Партипе совет организацийĕсен заем укçине пухассине хăвăртлатма халех татăклă мерăсем йышăнмалла.

М. КАРПОВ.

КĔСКЕН

● ВĂРНАР. Анаткас Уравăшри Киров ячĕпе тăракан колхозра çĕнĕ заема пур колхозниксем те туяннă. Заема пурĕ 150 пин тенкĕлĕх сарнă. Бородавкин юлташ 4 пин тенкĕлĕх, Шаланков юлташ 3.200 тенкĕлĕх çырăнса, укçине сийĕнчех тÿленĕ.

● ОКТЯБРЬСКОЕ. Наратчакки ялсовечĕ заем облигацийĕсем çине выляв тухнине тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслесен, 53 çын выляса илни палăрнă. Вĕсенчен нумайĕшĕсем халĕ çĕнĕ заема иртнĕ çулхинчен икĕ-виçĕ хут ытларах туянаççĕ.

Совет Союзĕн Геройĕ И. В. Яшин Шупашкарта

Шупашкара хăйĕн ашшĕпе—Василий Васильевич Яшинпа пĕрле пирĕн земляк Совет Союзĕн Геройĕ Иван Васильевич Яшин килчĕ.

Яшин юлташ унччен хăйĕн тăван ялĕнче — Пăрачкав районĕнчи Бахмутово ялĕнче пулнă. Вăл унта районри активпа, Пăрачкаври педтехникумри учительсемпе тата студентсемпе тĕл пулса калаçнă. Çавăн пекех хăй вăрçăччен учитель пулса ĕçленĕ Никулинкăри вăтам шкулта та пулнă.

Виçĕмкун И. В. Яшин юлташа Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕнче йышăннă.

Çуркуннехи кун çулталăк тăрантарать: вăхăтра акатăн—тырпуллă пулатăн, кая юлатăн—çухататăн

Ĕç пахалăхне ÿстермелле, ĕçе хăвăртлатмалла

Майăн 10-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем 107.065 гектар ака сухи тунă. Вăл шутран тракторсемпе 20.946 гектар сухаланă. Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсем 86.458 гектар, клевер 8.212 гектар акнă.

26.268 центнер вăрлăха яровизацилесе акнă. 31.131 гектар çинчи кĕрхи калчасене апатлантарнă, 18.215 гектар сÿреленĕ.

Суракинче Калинино, Елчĕк, Çĕрпÿ тата Шăхасан районĕсем малта пыраççĕ. Кувакино, Улатăр, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Йĕпреç тата Ишлей районĕсем юлса пыраççĕ, пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене акассине вăраха тăсаççĕ.

Канаш районĕнчи «Хавас», «Молния» колхозсем пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене 5 кун хушшинче акса пĕтерне.

Шупашкар районĕнчи «Дружба» колхоз (председателĕ Матвеев юлташ), «Броневик» колхоз (председателĕ Петров юлташ) майăн 10-мĕшĕ тĕлне ирхи тырăсене районра чăн малтан акса пĕтернĕ.

Чурачăк районĕнчи «Правда», «Красная Чувашия», «Победа», «Коминтерн» колхозсем те пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтернĕ.

Елчĕк районĕнчи Сталин тата Пушкин ячĕсемпе тăракан колхозсем те майăн 10-мĕшĕнче ир акакан тĕштырăсем акассине вĕçленĕ.

Ишлей районĕнчи «МОПР» колхоз районра малта пырать. Унăн план тăрăх 212 гектар акмалла, майăн 10-мĕшĕ тĕлне 160 гектар акнă.

☆ ☆ ☆

СĔНТĔРВĂРРИ, майăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). «Красная Армия» колхоз (председателĕ Анкудинов юлташ) паянхи кун тĕлне тĕштырăсем акмалли плана пĕтĕмпех тултарнă.

Трактористка Егорова юлташ кулленхи нормăна 120 процент тултарать. Трактористсем Сергушенко тата Кроля юлташсем кулленхи нормăна 200-шер процент тултараççĕ. Трактористка Юнусова юлташ паян çураки вăхăтĕнче тумалли ĕç планне 100 процентчĕпех тултарчĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). ВКП(б) Обкомĕн решенине сÿтсе-явнă хыççăн чылай колхозсенче ака ĕçĕсем хăвăртланчĕç. Анчах агротехникăна пăснă тĕслĕхсем халь те нумай-ха. Уйрăм колхозсенче ака ĕçĕсем çаплипех çителĕксĕр пыраççĕ.

«Красноармеец» колхозра сухаласси акассинчен уйăрăлса пырать, çавăнпа та сухаланă çĕр акиччен типет. Акасса яровизацилемен тата имçампа чÿхемен вăрлăхсем, алăпа акаççĕ.

«Большевик», «Свобода» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче те тырăсене алăпа акаççĕ, ăшăх сухалаççĕ. Ку çес те мар, сухаланă хыççăн акса ĕлкĕреймеççĕ. Кунта агротехника правилисене нумай çĕрте пăсаççĕ пулсан та район руководителĕсем кирлĕ пек мерăсем йышăнмаççĕ.

* * *

ЧУРАЧĂК, майăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). «Правда» колхозра (председателĕ Иванов юлташ) çураки ĕçĕсем чăтма çук юлса пыраççĕ. Кунта звеносене ячĕшĕн кăна тунă, колхозниксем ушкăнпа ĕçлеççĕ, кам мĕн чухлĕ ĕç туни паллă мар, колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва сарса яман. Çавăнпа та кăтарту хăми çине акана тухнăранпа нимĕн те çырман. Массăллă-ăнлантарулла ĕçе ячĕшĕн çеç тунă. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен» йышăннă постановление колхозниксемпе колхознипăсене те ăнлантарса паман

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ, майăн 11-мĕшĕ. (Хамăр корр.). «Коммунар» колхозра акасси сухаласинчен нумай юлса пырать. Паянхи кун тĕлне 84 гектар сухаланă, 56 гектарне кăна акнă.

Кунта МТС тракторĕсем ĕçлеççĕ. Майăн 4-мĕшĕпе 7-мĕшĕ хушшинче тракторпа пурĕ те 36 гектар çеç сухаланă. Тракторпа акмалли сеялка пур, унпа усă курмаççĕ. МТС директорĕ Алексеев юлташ: сеялкăсем илме колхозран лаша ярăр,—тесе «кăтарту» панă. Паллах, çак «кăтартăва» колхозсем, мĕнпур лашасем акара пирки, пурнăçлаймаççĕ, çавăнпа та сеялкăсем МТС картишĕнчех лараççĕ.

«Трактор», «Коммунар» колхозсем хĕллехи вăхăтрах тракторсем валли çителĕклĕ горючи кÿрсе килнĕ. Алексеев хушнипе вĕсем илсе килнĕ горючине ытти колхозсене панă. «Трактор» колхозри МТС-ăн тракторĕ кăраççын çуккипе ĕçлемесĕр ларать.

Тракторсемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ, вĕсене сÿресем кăкарман. «Коммунар» колхоз председателĕ Быков юлташ хытă тăнипе çеç трактор плугĕсем сÿресем кăкарса ĕçлеме тытăннă.

«Коммунар» колхозăн пăрçа йышши культурăсем 44 гектар акмалла, вăрлăхĕ пурĕ те 6 гектарлăх кăна. Çак колхозăн вăрлăх çитменни район руководителĕсемшĕн те тахçанах паллă пулнă, анчах та ытти колхозсенчен кивçен е укçалла илме никам та пулăшман.

Комсомольски районра ака ĕçĕ организованно пырать теме çук-ха, ĕçре çитменлĕхсем нумай. Çитменлĕхсене пĕтерсе, ака ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла.

У. Николаева юлташăн бригади çураки планне ытлашшипех тултарчĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Çуракине кăтартуллă ирттерессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хĕрарăмсен 8-мĕш трактор бригади (бригадирĕ У. Николаева юлташ) паян çураки вăхăтĕнче тумалли ĕç планне 100,5 процент тултарчĕ, çав вăхăтрах 580 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ.

Çак бригадăри трактористка О. Мефодьева юлташ кулленхи нормăна 200 процент, Е. Никифорова трактористка 150 процент тултарса пычĕç. Ульяна Николаева ертсе пыракан бригада МТС-ăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илчĕ.

Унпа ăмăртакан Иванова Екатерина бригади те çураки вăхăтĕнчи плана 75 процент тултарчĕ.

Тракторист В. Егоров юлташ 83 гектар сухалас вырăнне 115 гектар сухаларĕ.

Паянхи кун тĕлне МТС çураки вăхăтĕнчи тумалли ĕçсен планне 55 процент пурнăçларĕ.

Социализмлă ăмăрту малалла та анлăн сарăлса пырать.

МТС директорĕ КОНСТАНТИНОВ.

Кашнин пĕр ĕмĕт—вăйлă тырпул туса илесси

Елчĕк районĕнчи Тăрмăш ялсоветне кĕрекен колхозсем кăçал çуракине лайăх хатĕрленсе тухрĕç. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен» йышăннă постановление пур колхозсенче те тĕплĕн сÿтсе-явнă. Çав постановлени вăйлă тырпул туса илес ĕçĕн программи пулса тăчĕ.

«Новый путь» колхозпа «Знамя» колхоз вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем кĕрхи калчасене апатлантарчĕç

«Красное Знамя» колхоз та вĕсенчен юлмарĕ. Колхоз председателĕ Варламов çуркуннехи ĕçсене пĕлсе организацилерĕ. Колхоз 20 гектар кĕрхи калчасене апатлантарчĕ, ака ĕçĕнче тĕрĕс ĕç планĕ туса, уйра уйрăмăн ĕçлессине йĕркелерĕ. Çакăн пек меслетпе ĕçлени çуракине ăнăçлă ирттерме май пачĕ. Майăн 5-мĕшĕ тĕлне çак колхоз пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене пĕтĕмпех акса пĕтерчĕ.

Суракинче «Знамя» колхоз та аван ĕçлет. Унăн пурĕ 380 гектар акмалла. Майăн 8-мĕшĕ тĕлне 265 гектар сухаланă, 178 гектар акнă. Уйрăмăнах кунта 2-мĕш бригада (бригадирĕ Г. Осипов юлташ) аван ĕçлет. Унăн бригадинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Кунта лашасем вăйлă. Ирина Муллина, Валентина Осипова сухаçăсем кулленхи нормăна 130—140 процент тултараççĕ. Акакансем А. Михайлов, А. Тихомиров юлташсем те лайăх ĕçлеççĕ. Ĕç пахалăхĕ лайăх. Пахалăх инспекторĕсем яланах уйра, ĕçе тĕрĕслесех тăраççĕ.

«Новый путь» колхоз членĕсем те кăçал иртнĕ çулхинчен лайăхрах ĕçлеççĕ. Унта паянхи кун тĕлне пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене 60 процента яхăн акнă. Сухаçăсем кунта та кулленхи нормăна 140 процента çити тултараççĕ.

«Новый путь» колхоз кÿршĕри Тĕмер ялĕнчи юлса пыракан «Коминтерн» колхоза пулăшса пырать. Çак колхозăн лашасене çитерме улăм çителĕксĕррине шута илсе, вĕсене улăм кивçен патăмăр. Унсăр пуçне «Коминтерн» колхозăн 20 гектар çĕрне хамăр вăрлăхпа тата хамăр лашасемпе акса паратпăр.

Пирĕн колхозсем Калинин облаçĕнчи «Красный путиловец» колхоз членĕсем чĕнсе каланине йышăнчĕç, вăйлă тырпул туса илессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Пирĕн умра пĕр задача — кашни гектартан вăтам шутпа çĕр пăтран кая мар тĕштырă, 120 центнертан кая мар çĕрулми туса илесси. Çак задачăна пурнăçлассишĕн колхозниксемпе колхозницăсем кунĕн-çĕрĕн тăрăшса ĕçлеççĕ

П. ЩЕРБАКОВ,
Тăрмăш ялсовет исполкомĕн председателĕ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ГЕРОЙĔСЕМ

Пирĕн земляк — Совет Союзĕн Геройĕ М. А. Сапожников.

Герой Иван Поляков

(Юрă)

Санра тăван Атăл хăвачĕ,
Донпа Донец вăйĕ санра.
Сана аслă паттăрлăх пачĕ
Мухтавлă хула — Сталинград

Паттăр хăват çулăмлантăр
Пур тăшмана аркатса.
Гварди ялавĕ ялан та
Пытăр малта ялкăшса.

Шывсем, вăрмансем, тусем урла
Эс каçрăн, хастар арăслан.
Телейлĕ те ирĕклĕ пурнăç
Утать санпала тухăçран.

Эс Днепр умне пырса тухран—
Пуçланчĕ манми çапăçу.
Çак аслă шыв урлă эс хыврăн
Вутпа çулăмран тÿрĕ çул.

Шевченко çĕршывĕ тăванăн
Сана тав туса саламлать.
Васка эс, çĕршыв арăсланĕ,
Иван Поляков — малалла!

Паттăр хăват çулăмлантăр
Пур тăшмана аркатса.
Гварди ялавĕ ялан та
Пытăр малта ялкăшса!

А. ĔСХĔЛ.

1944 çул.

АЧАСЕН СЫВЛĂХĔШĔН ТĂРĂШНИ

Çуллахи лагерьсенче тата сыватакан площадкăсенче кăçал 2 миллион ача канмалла

Вăрçăн йывăр условийĕсенче большевиксен партийĕпе совет правительстви ачасен сывлăхĕшĕн калама çук хытă тăрăшаççĕ. Çак кунсенче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1944 çулхи çуллахи вăхăтра ачасен канăвне организацилесси çинчен ятарласа постановлени йышăннă.

СССР Совнаркомĕ июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа шкул ачисемпе шкул çулне çитмен 2.370.000 ачана хуласенчен дачăсемпе пионер лагерĕсене яма, çавăн пекех тата ача площадкисене вырнаçтарма йышăннă.

ВЦСПС-а, СССР Наркомздравне тата союзлă республикăсен Наркомпросĕсене шкул ачисемпе шкул çулне çитмен ачасене канма, чи малтан çар çыннисемпе Отечественнăй вăрçă инваличĕсен çемьисен членĕсене, суйласа илсе яма хушнă.

СССР Совнаркомĕ СССР Наркомздравне лагерьсемпе ача площадкисене медицинăпа санитари енчен пулăшса тăма, вĕсене медикаментсем, медицина инструменчĕсем тата сыхмалли хатĕрсем парса тăма хушнă. Ача лагерĕсемпе площадкисене апат-симĕç парса тăма СССР Совнаркомĕ хушшă тăрăх хăйне уйрăм фондсем уйăрса хунă.

СССР Совнаркомĕн постановленийĕпе килĕштерсе, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн райкомĕсене, горкомĕсене, обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи комсомолăн Центральный Комитечĕсене профсоюзсемпе, сутĕç тата сывлăха сыхлас ĕç органĕсемпе пĕрле çуллахи пионер лагерĕсемпе ачасен сыватакан площадкисене организацилеме тытăнма хушнă. (ТАСС).

Чăх-чĕпсене юратса пăхать

ИШЛЕЙ. Калинин ячĕпе тăракан колхозăн чăх-чĕп ферми çулран çулах тупăш нумай парать. Колхоз государствăна çăмăрта памалли плана срокчен тултарса, юлашкине сутса тупăш илет.

Чăхсене пăхас ĕçре М. Сенцова юлташ тăрăшса ĕçлет. Вăл чăхсене пăхас ĕçри ветеринари правилисене пурнăçлать. Чăхсем тахçанах çăмарта тума пуçланă. Колхоз государствăна кăçалхи çулшăн 780 çăмарта панă.

Лайăх ĕçленĕшĕн М. Сенцова юлташа иртнĕ çул СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ «Отличник Социалистического сельского хозяйства» значек панă.

Р. КАЗАНКОВА.
Выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕ.

Ют çĕршывсенче

Швеци хаçачĕ Сталин юлташăн сăмахĕсен сборникĕ çинчен

СТОКГОЛЬМ, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонтиднинген» хаçатăн главнăй редакторăн заместителĕ Иедаль, Сталин юлташăн сăмахĕсен Швецире кăçал кăларнă сборникĕ çинчен статья çырать. Иедаль çапла çырать: Германи вăрçăра аяла пуласси пирки халь никам та иккĕленмест ĕнтĕ. Вăрçăра Совет Союзĕ çиеле тухать. Çакна халăх ытларах та ытларах ăнланса илет. Кĕнеке магазинĕсенче Сталин сăмахĕсен сборникĕсене сутма пуçлани те çавна кăтартса парать».

Сталинăн сăмахĕсене вуласан, — тесе çырать Иедаль, — Совет Союзĕ Октябрьти революци пулнăранпа хальхи вăхăтчен мĕнле аталанса пынине лайăх куратăн. Çав сăмахсем пурнăçа тĕрĕс çутатса параççĕ. Вĕсенче çĕршыва чи кĕске вăхăтрах индустрилени çинчен каланă. Вĕсем Совет Союзĕн пани политикипе паллашмалли чи лайăх материалсем пулса тăраççĕ, çав политика вăл тĕрлĕ çăвăсене тата тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан темиçе вунă халăха пĕтĕçтернĕ питĕ чаплă цемент пулса тăрать. Юлашкинчен, Сталин хăйĕн сăмахĕсенче Совет Союзĕн «тĕлĕнмелле» тулашри политикине ăнланма пулăшать. Сталин ĕçĕ Совет Союзĕн юлашки çирĕм çул хушшинчи политикинче питĕ хытă палăрать. Вăл мĕнле çын пулни унăн сăмахĕсенчен лайăх курăнать. Вăл чĕре хыççăн каймасть, ăс хыççăн каять, вăл питĕ ăнланмалла калать, хăш чухне кăшт вĕрентсе калать. Сталин хăйсем çамрăк чухне кая юлнă хресчен пурнăçĕпе пурăннă çынсем çине таянса тăрать, çав çынсем халĕ хальхи вăхăтри пысăк промышленноçа тата тĕнчери чи вăйлă механизациленĕ ялхуçалăхне тытса тăраççĕ. Малашнехи пурнăç Российăн сталинла тапхăрĕн чăн пĕлтерĕшне лайăх кăтартса парĕ».

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: майăн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем Францирпе Бельгие тапăннă. Çавăн пекех тата Оснбрюкпа Рур облаçĕнчи объектсене тапăннă.

Майăн 8-мĕшĕнче кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсем Брюссель çывăхĕнчи сортировка станцине, çавăн пекех тата Па-де-Калепе Шербур районĕнчи вăрçă объекчĕсене тапăннă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен Европăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: майăн 9-мĕшĕнче кăнтăрла американецсен 8-мĕш авиаци корпусĕнчи йывăр бомбардировщиксем пин самолета яхăн нимĕçсен Францири, Бельгири, Голландири аэродромĕсене тата чугун çул депоĕсене тапăннă. Американецсен вăтам бомбардировщикĕсем Çурçĕр Францирпе Бельгири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ЭГЕЙ ТИНĔС РАЙОНĔНЧИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи авиацийĕ Эгей тинĕс районĕнче тăшманăн вăрçă объекчĕсемпе аэродромĕсене татти-сыпписĕр атакăланă. «Бофайтер» йышши самолетсем икĕ кун хушшинче Крит, Китира утравĕсем çинчи тата Кăнтăр Грецири вăрçă сооруженийĕсене самаях вăйлă сиенленĕ. «Мэродер» йышши самолетсем Крит утравĕ çинчи Кастелли аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă. «Бофайтер» йышши самолетсем Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче тăшманăн конвой судисене атакăланă. Çав атакăра пĕр эсминеца сиенленĕ.

Майăн 8-мĕшĕнче «Бофайтер» йышши самолетсем Парос утравĕ çинчи горючи склачĕсене вут тивертнĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: главнăй фронтăн сăртлă секторĕнче союзниксен çарĕсем Майелла хулинчен кăнтăртарахра малалла куçнă. Фронтăн ытти секторĕсенче улшăнусем пулман.

ЛОНДОН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Италире мĕнпур фронтсенче лăпкă тăнă. Союзниксен çарĕсем пысăках мар Палена хулине туртса илнĕ (Вăл Адриатика тинĕс хĕрринчи Майелла тăвĕсем хушшинче ларать), çав районра халь малалла куçса пыраççĕ.

Авиаци тăшманăн Италири вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ГЕРМАНИЕ ВОЛЬФРАМ ПАРСА ТĂНИ ÇИНЧЕН «ДЕЙЛИ УОРКЕР» ХАÇАТ ÇЫРНИ

ЛОНДОН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли Уоркер» хаçатăн дипломатилле ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла çырать: Вашингтон ытларах хистемесен, Португали тăратакан вольфрам пирки те, Испани тăратакан вольфрам пирки тухнă пекех, тавлашу тухма пултарать. Çав икĕ çĕршывран тавар ярса тăрасси пĕр-пĕринпе çыхăнса тăрать, — тесе çырать çав сотрудник, — мĕншĕн тесен Испани правительстви, Германие кирлĕ чухлĕ вольфрама Португали чикки урлă каçарса ярса, кайран ăна Германие Португали вольфрамĕ пек шутласа сутма хатĕрленет.

Португали правительстви халĕ çапла калать: Португалирен Германие таварсем яма пăрахсан, Португалин укçа-тенки, çавăнпа вара фашистсем майлă режимĕ те пĕтсе ларать. Вăл çапла ыйтать: е Португалие, Англин шанчăклă союзникĕ пулса тăрать тесе шутласа, тăшман çар хатĕрĕсем ĕлĕкхи пекех парса тăма ирĕк памалла, е Англипе Америка правительствисен Португалие спекулянтла пысăк хак тÿлемелле, мĕн чухлĕ тÿлемеллине Португали правительстви хăй кăтартса памалла, тет.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Сербире нимĕçсен, недичевецсен тата Михайлович четникĕсен пысăк вăйĕсене хирĕç хаяр çапăçусем пыраççĕ. Ужице—Вальево участокне четниксем Сербин мĕнпур районĕсенчен вăйсем илсе пырса тăратнă: Михайлович панă приказа тытса илнĕ. Çав приказра Михайлович хăйĕн четникĕсене нимĕçсемпе болгарсен оккупаци çарĕсемпе пĕрле Югославин халăхĕ ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарне хирĕç çапăçма чĕнет.

Хĕвелтухăç Боснире тăшман фронтăн пур участокĕсенче те малалла тапăнса пырать, вăл пуринчен те ытларах Дрина шывĕ çинче хĕсет, хăйĕн Сербири çарĕсене пулăшма хăтланать. Юлашки çапăçусенче халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн 17-мĕш дивизийĕн чаçĕсем 300 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ е амантнă.

Санджакра халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем çапплах наступлени туса пыраççĕ, тăшмантан Бродарево—Плевле районне тасатаççĕ. 100 çынна ытла тыткăна илнĕ. Черногорире халăха ирĕке кăларакан çар чаçĕсем çĕнĕрен Беран хулине вăркăнса кĕрсе кайнă, халĕ тăшманпа хула урамĕсенче çапăçаççĕ.

АНГЛИПЕ АМЕРИКА АПРЕЛЬ УЙĂХĔНЧЕ ШЫВ АЙĔНЧИ ВĂРÇĂ МĔНЛЕ ПЫНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельтпа Черчилль, пĕрле алă пуса, 1944 çулхи апрель уйăхĕнче шыв айĕнчи вăрçă мĕнле пулса пыни çинчен хаçатсенче пĕлтернĕ.

Унта çапла каланă: нимĕçсем союзниксен суту-илÿ суднисене путаркаланă, анчах ку уйăхра та нимĕçсен подводнăй лодкисене çав шутран ытларах путарнă. Пĕрлешÿллĕ нацисем тăшманăн подводнăй флотĕпе питех те ăнăçлăн кĕрешеççĕ.

ЭЙРЕ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ОТСТАВКĂНА ТУХМА ПУЛТАРАТЬ

ЛОНДОН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Эйрер парламентра транспорт çинчен калакан законопроекта сасăланă чухне де Валера правительстви аяла пулнă. Çав законопроекта йышăннă пулсан, правительство чугун çулсене тĕрĕссипе национализацилене пулĕччĕ.

Правительство çавăн пек питĕ пахa ыйтупа поражени тÿсни ăна шанманнипе пĕрех пулса тăрать, çавăнпа та вăл отставкăна тухма пултарать.

Майăн 10-мĕшĕнче ирхине Дублинра официально çапла пĕлтернĕ: Эйрере пĕтĕмĕшле суйлав пулса иртет. Сасăласса майăн 30-мĕшĕнче сасăлаççĕ пулмалла.

ИСЛАНДИРЕ РЕФЕРЕНДУМ ПУЛСА ИРТЕТ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Исланди правительстви тата Исландири политика партийĕсем тăваттăшĕ те халăха чĕнсе каланă. Вĕсем халăха майăн 20-мĕшĕнче пулса иртмелли референдумра республика тăвассишĕн сасăлама чĕнеççĕ.

1918 çулта тунă договор тăрăх, Исланди Дани ку тараннчен пĕр государство пек шутланса тăнă. 1943 çулăн вĕçĕнче çав договорăн срокĕ тухнă. Çавăн хыççăн Исланди парламенчĕ Даниле çыхăнса тăма пăрахмалла тесе йышăннă, республикăн çĕнĕ конституцине ырланă. Çав конституци çитес июнь уйăхĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа законлă пулса тăмалла. Референдум туса, ирттерни парламент пĕр шухăшлă пулса йышăннă решение пĕтĕм халăх ырланине кăтартса памалла.

Кĕскен

▲ Бразилирен Европăна унта çапăçма палăртса хунă çарсен юлашки авиаци соединенине ăсатса янă.

▲ Майăн 9-мĕшĕнче, револьверпа темиçе хут персе, Рим комендантне Ролле генерала вĕлернĕ. Вĕлерекенсене тытайман.

Çуллахи спорт сезонне уçни

Ÿкерчĕк çинче: «Спартак» обществин членĕ Анна Лукоянова финиша чи малтан чупса çитет. Çуллахи спорт сезонĕ пуçланнă ятпа тунă эстафетăра унăн команди мала тухнă.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Майăн 7-мĕшĕнче Шупашкарта физкультурăпа спортăн çуллахи сезонĕ уçăлнă ятпа митинг пулса иртрĕ. Митингра ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ Грусова юлташ физкультурăпа спортăн çуллахи сезонĕн задачисем çинчен сăмах тухса каларĕ.

Митинг хыççăн физкультурниксен эстафети пулса иртрĕ. Унта 83 çын (20 команда) хутшăнчĕç. Арçынсенчен пĕрремĕш вырăна «Динамо» обществи — Капитонов, Васильев, Иванов юлташсем йышăнчĕç. Вĕсем 1000 метра 13 минут та 39,5 секундăра чупса тухрĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Н-ски часри командăсем йышăнчĕç. Хĕрарăмсенчен пĕрремĕш вырăна «Спартак» обществи— Лаврентьева, Иванцова, А. Лукоянова, Анна Лукоянова, Лушкина юлташсем йышăнчĕç. Вĕсем 500 метра 12 минут та 18 секундăра чупса тухрĕç. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене «Спартак» тата «Буревестник» обществисем йышăнчĕç.

Çав кунах «Динамо» клубĕнче комсомолпа физкультура активĕн хулари пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта физкультурăпа спорт ĕçĕсен хĕллехи сезонĕн итогĕсемпе çуллахи сезонĕн задачисем çинчен сÿтсе-яврĕç.

Юлашкинчен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт комитетне хĕллехи сезонра лайăх ĕçленĕшĕн СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт комитечĕн хисеплĕ грамотине пачĕç.

Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлес тĕлĕшпе активлăн ĕçленĕшĕн СССР Союзĕн спорт мастерне—«Буревестник» обществин инструкторне Мария Гущинăна, СССР Союзĕн спорт мастерне Геннадий Иванова, «Динамо» обществин инструкторне Нирнштейн юлташа, хулари физкультурăпа спорт ĕçĕн комитечĕн председательне Филичкина юлташа, «Буревестник» обществин обществăллă инструкторне Юдина юлташа, Шупашкар районĕнчи обществăллă инструктора Якимов юлташа СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт комитечĕн хисеплĕ грамотисене парса наградăларĕç.

А. ВАСИЛЬЕВ

Çитес вăхăтра тумалли докладсемпе калаçусен ТЕМИСЕМ

1. Хĕрлĕ Çар 1943—44 çулхи хĕллехи кампанире тунă питĕ чаплă çитĕнÿсем.
2. Хĕрлĕ Çар мĕне пула çĕнтерсе пырать.
3. Тăшмана çĕнтерместĕн фронта мĕн кирлине пурне те парса тăрас ĕçре совет халăхĕ тунă таткăлă çитĕнÿсем.
4. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе фашистла государствăсен блокĕ арканни.
5. Тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкас тĕлĕшпе Хĕрлĕ Çарпа пĕтĕм совет халăхĕ умĕнче тăракан задачăсем.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

Ответлă редакторăн ĕçĕсене тăвакан̆ĕ П. Н. НИКОЛАЕВ.

Шупашкарти тир тăвакан базăна (Кожсырьеобработка базине) хупаççĕ. Çав базăран мĕн те пулин илмелле пулсан, ун çинчен 1944 çулхи майăн 15-мĕшĕччен пĕлтермелле. Çав срок иртсен нимĕнле претензисене те йышăнмаççĕ.

Энерготрансучтекстилĕн Шупашкарти филиалĕн автошколи шоферсене газогенераторлă автомашинăсемпе çÿреме вĕрентет. Вĕренессе учреждени ĕçлеме ярахса та, ĕçлеме ярамасăр та вĕренме пулать.

Курсра вĕреннĕшĕн уйрăм граждансенчен те, хăйсен рабочийĕсене вĕренме янă предприятисенчен те укçа илмеççĕ.

Учрежденире ĕçлеме ярахса вĕренес пулсан — 7 кун вĕренмелле, ĕçлеме ярахмасăр вĕренес пулсан—14 кун вĕренмелле.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. К. Либкнехта, 14, Чебоксарский филиал Энерготрансучтекстиль.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.